***Чăвашсен паллă писателĕ, пĕтĕм халăх юратса вулакан «Ĕмĕр сакки сарлака» роман авторĕ Никифор Мранька çуралнăранпа 100 çул çитнĕ май***

# «ПĂХĂР МАНА, ПĂХĂР. ТЕН, УРĂХ КУРАЙМĂР ТА?...»



***Никифор Федорович Мранькана, халăхăмăрăн чаплă çыравçине пĕлмен чăваш çук та пулĕ. Çĕртме уйăхĕн 9-мĕшĕнче вăл çуралнăранпа пĕр ĕмĕр çитрĕ. Çавна май иртнĕ эрнере, юн кун Шупашкарта, К. В. Иванов ячĕллĕ Литература музейĕнче ăна халалласа юбилей касĕ пулчĕ. Сире çак уявран хатĕрленĕ материалпа паллаштаратпăр.***

Галина Еливанова, музей ĕçченĕ: «Ĕмĕр сакки сарлака» романри Çтаппан - чăн пурнăçри çын, Куславкка районĕнчи Елчĕк ялĕнче çуралса ÿснĕ Иван Иванович Измайлов. Вăйлă та тĕреклĕ, çирĕп хул-çурăмлă чăваш. Пĕринче ун килĕнче ар çынсем пуçтараннă, Измайлов самаях йывăр тихана хул пуççи çине хурса картиш тавра виççĕ çавранать. Вутта кайсан, каялла килнĕ чух Иван Ивановичăн лаши чăхăмлама пуçлать, ăна тăварать те лаши вырăнне кÿлĕнет, лава хăй туртса килет. Тепрехинче ултă çын аран-аран йăтакан 480 килограмлă çăка пăрахут çине пĕччене йăтса кĕрет. Циркра тĕрĕк кĕрешÿçине çĕклет те хул пуççи урлă çаварса çапать. Измайлов 88 çул çитиччен пурăннă».

Георгий Ефимов, Чăваш халăх поэчĕ: «Никифор Мранька хăй евĕр çынччĕ. Чăваш академи драма театрĕнче унăн 11 пьесине лартнă. Чи юлашкине - «Ванюшин сержанта» пĕтĕм республикипех кăтартса çÿренĕ. 1944 çулта артистсем Канаш районне килсен спектакль пăхма вăтакас Кипече кайрăм. Спектакльте нимĕç фашисчĕ совет салтакне пăвнă самант пур. Шăп çав вăхăтра курав залĕнчен пĕр шăпăрлан сиксе тухать те фашиста патакпа яра парать. Нимĕç рольне вылякан артист çухалса каймасть, ачана сцена çинелле сĕтĕрме тытăнать. Шăпăрлан: «Анне! Фашист вĕлерет!» - тесе кăшкăрса ярать. Çак сцена Никифор Федорович чăн пурнăçри пек ĕненмелле сăнарсем тума пултарнине кăтартса парать.

50-мĕш çулсенче Куславккара, парти райкомĕн конференцийĕнче Мранька райком секретарьне ĕçри çитменлĕхсемшĕн питĕ вăйлă критиклет, çавăншăн ăна 5 çуллăха хупма приговор йышăнаççĕ. Сталин вилнĕ хыççăн çеç, 2 çул çурăран тухать вăл тĕрмерен. Кайран райкомра та, райĕçтăвкомра та ĕçленĕ. Хура е шурă чуссăнккипе çÿретчĕ. Мĕншĕн-ха? «Ура ыратать. Тĕрмере нар çинчен сивĕ бетон урайне пăрахатчĕç», - тесе калатчĕ. Куславккаран Шупашкара ятарласа голубцы çиме килетчĕ. «Коммунизм ялавĕнче» ĕçленĕ чухне Крысинпа иксĕмĕр Куславкка районне хаçат сарма кайрăмăр. Икĕ-виçĕ кун иртсен Мранька хăй патне шăнкăравлама ыйтни пирки пĕлтерчĕç. Шăнкăравларăм. Никифор Федорович çине тăрсах хăнана чĕнчĕ. Кăвак çуртра пурăнатчĕ. Питĕ лайăх кĕтсе илчĕ... Балалайка калама пуçларĕ. «Ташла! - терĕ арăмне. Унтан, - хĕрарăмăн мĕнле вăл пĕччен ташламалла, ак ку мĕн туса ларать?» - тесе Крысина урай варрине кăларчĕ, тепĕртакран мана та.

Мранька пек писатель пулнăшăн мухтанмалла çеç. Вăл пурнăçа сăнама пĕлнĕ. «Халăх умĕнче ответлăха туйса ĕçлетĕп», - тетчĕ. Çакна та каласа хăварасшăн: «Тăван Атăл» журналăн кăçалхи 6-мĕш номерĕнче Мранькан халиччен ниçта та пичетленмен пьеси тухмалла».

Асклиада Соколова, писатель: «Мранька кĕнекисем вăхăтра тухса пыраймастчĕç, чирлекелетчĕ. «Юн тымарĕсем чирлĕ пирки пÿрнесем патне юн пымасть, питĕ шăнаççĕ, çавăнпа кăçатпа çÿретĕп», - тетчĕ. «Вăт Мранька тĕрĕс çырать», - тесе калатчĕç халăхра».

Виталий Станьял, литература тĕпчевçи: «Мранькка çÿллĕччĕ, шакла пуçлăччĕ. Чĕлхи питĕ япшарччĕ. Ун патĕнче студентсемпе хăнара пулнăччĕ. Кăвак çутă килмесĕр кăларса ямарĕ. «Ĕмĕр сакки сарлакан» тăххăрмĕш кĕнекине çыратăп», - тетчĕ».

Василий Сорокин, радиожурналист: «Ĕмĕр сакки сарлака» роман хăвăрт сутăнса пĕтрĕ. Радиона çырусем килме пуçларĕç: «Романа тупса илме çук, сыпăкĕсене те пулин вуласа парăр». Передачăсем йĕркелерĕмĕр».

Петĕр Ялкир, поэт: «Тĕлĕнмелле пысăк писатель. Куславккара ун ячĕпе урам хисепленет. Мранька ятне çÿлерех çĕклемелле пирĕн».

Юрий Григорьев, ЧР культура тата национальноçсен ĕçĕсен министрĕн çумĕ: «Çĕртме уйăхĕн 8-мĕшĕнче Куславккара Мранькана сума суса вăл пурăннă «Çĕнтерĕвĕн 30 çулĕ» урамри çурт умне чул хураççĕ. Уява Чăваш Республикин Президенчĕ хутшăнать, Хусантан ывăлĕ килет».

Осип Алексеев, писатель-журналист: «Вăрмар районĕнчи Кĕлкеш шкулĕнче ĕçленĕ чух Мранькана тĕл пулас тĕллевпе ачасемпе ятарласа Куславккана кайрăмăр, çуранах. Столовăйĕнче ларттăмăр. Пырса кĕчĕ шурă чуссăнкки тăхăннă çын. Ара, ку Никифор Мранька вĕт. Хыпалансах ун патне пытăм. «Вăхăт çук, - терĕ малтанах. - Юрĕ, эппин. 3 минутлăх пур. Ачусене пуçтар. - Вĕренекенсем пухăнса тăрсан, - пăхăр мана, пăхăр, тен, урăх курáймăр та? Каярах тĕл пулăпăр. Эп сире хам чĕнĕп, кĕтсе илĕп. Халь вăхăт çук-ха», - тесе васкасах столовăйĕнчен тухса кайрĕ. Чăнах та, текех тĕл пулаймарăмăр Мранькана. Ачасем çак саманта темччен аса илсе пурăнчĕç».

Николай Иванов, критик: «Ĕмĕр сакки сарлака» роман чăваш литературинче чăннипех те пысăк йĕр хăварчĕ».

Валентина Эльби, писатель: «Ман куç умĕнче вăл уссиллĕ, пичĕ хĕрлĕччĕ...»

**П. ÇĂЛКУÇ хатĕрленĕ.**